# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

Муркаш район хаҫачӗ

1944 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 5-мӗшӗнчепе тухать

2 (8768) № * Юнкун, 2020 ҫулхи кӑрлач (январь) уйӑхӗн 15-мӗшӗ * Хакӗ ирӗклӗ

Республикӑра

## Ҫырӑва хатӗрлес ӗҫ пырать

**Чӑваш Республикин Пуҫлӑхӗ Михаил Игнатьев ҫулленхи Ҫырупа Чӑваш Республикин Патшалӑх Канашне тухма хатӗрленет. Ӑна валли материалсене пухас ӗҫ пуҫланнӑ та ӗнтӗ. Яланхиллех тӗп документра Чӑваш Республикин Правительствин ӗҫ-хӗлне ҫутатса парӗҫ, Чӑваш Республикин Патшалӑх Канашӗн, вырӑнти хӑй тытӑмлӑх органӗсен, предприятисемпе организацисен ҫитес тапхӑрсенчи, пуласлӑхри тӗп тӗллевсем пирки палӑртса хӑварӗҫ.**

Ҫырура яланхиллех халӑхӑн сӗнӗвӗсене ытларах шута илме тӑрӑшаҫҫӗ, общеҫтвӑлла организацисен витӗмлӗхне те тӗпе хума ыйтаҫҫӗ.

Халӑхӑн пурнӑҫ условийӗн шайне лайӑхлатас тесессӗн мӗн ҫине тимлӗх ытларах уйӑрмалла? Ку е ытти ыйту хайӗн хуравне тупӗ.

Мӗн кӗртсе хӑварнӑ пулӑттӑр эсир те асӑннӑ Ҫырӑва? Сӗнӳсене ҫак адреспа ҫырса пӗлтерме пултаратӑр: Чӑваш Республики, Шупашкар хули, Президент бульварӗ, 10-мӗш ҫурт. Электрон адресӗ: e-mail: analit2@cap.ru. «Для подготовки Послания» тесе паллӑ тумалла.

**ЧР Пуҫлӑхӗн Администрацийӗн пресс-служби.**

Редакцирен

## Уявсем ячӗпе

**Хаклӑ вулакансем! Сире Раҫҫей пичечӗн тата Чӑваш пичечӗн кунӗсемпе тулли кӑмӑлпа саламлатпӑр!**

**Хаҫат кӑларасси – питех те кӑткӑс ӗҫ. Редакцире вӑй хуракансем тӑрӑшнипе ҫеҫ сумлӑ хаҫат тӑвӑймӑн. Ҫавӑнпа «Ҫӗнтерӳ ялавне» ҫуллен ҫырӑнса илекенсене, хаҫатпа ҫыхӑну тытакан яваплӑ ӗҫченсене, канӑҫсӑр ялкорсене, хастар почтальонсене пысӑк тав сӑмахӗ калатпӑр! Сире пӗрлехи уявсемпе саламласа сывлӑх, ӑнӑҫу сунатпӑр!**

**Хаҫат редакцийӗ.**

# Стипендиат пулма тивӗҫрӗ



*Муркаш район администрацийӗн информаципе тивӗҫтерекен секторӑн ертсе пыракан эксперт специалисчӗ Кристина Зайцева кӑҫал Чӑваш Республикин Пуҫлӑхӗн стипендиачӗ пулма тивӗҫрӗ. Вӑл – Муркаш район администрацийӗн официаллӑ сайчӗн администраторӗ. Шанса панӑ ӗҫе пысӑк ответлӑхпа пурнӑҫлама тӑрӑшать. Ҫак ӗҫ ҫырас, сӑн ӳкерчӗксене редакцилес тата ытти енлӗ пултарулӑхпа ҫыхӑннине, ҫавӑнпах килӗшнине палӑртать. Муркаш район территори суйлав комиссийӗ ҫумӗнчи ҫамрӑксен суйлав комиссийӗн членӗ пулнӑ май, Кристина Зайцева районӑн общеҫтвӑлла пурнӑҫне те активлӑ хутшӑнать.*

*Н. НИКОЛАЕВА сӑн ӳкерчӗкӗ.*

**ХИСЕПЛӖ ЖУРНАЛИСТСЕМ, ЧӐВАШ ЕНӖН ПИЧЕТПЕ МАССӐЛЛӐ ИНФОРМАЦИ ХАТӖРӖСЕН ӖҪЧЕНӖСЕМПЕ ВЕТЕРАНӖСЕМ!**

Сире Раҫҫей тата Чӑваш пичечӗн кунӗсен ячӗпе саламлатӑп!

Чи сутӑ та пӗлтерӗшлӗ пулӑмсене туллин сӑнласа парса эсир Чӑваш Республикин хальхи вӑхӑтри летопиҫне ҫырса пыратӑр. Сирӗн ӑсталӑхӑра пула республикӑра пурӑнакансем ку чухнехи ҫивӗч те тулли тата тӗрӗс информацие вӑхӑтра илсе тӑраҫҫӗ, ҫакӑ вӗсене пурнӑҫри лару-тӑрӑва тивӗҫлипе хаклама май парать. Эсир ҫынсен ыйтӑвӗсене кирлӗ ҫӗре ҫитеретӗр, хӑвӑр хатӗрлекен статьясемпе сюжетсенче пурне те хумхантаракан ҫивӗч ыйтусене хускататӑр тата вӗсене татса парассине тивӗҫтеретӗр.

Сирӗн тупӑшу хутлӑхӗнчи пархатарлӑ ӗҫӗре пурнӑҫлама пысӑк яваплӑх, васкавлӑх тата ҫӳллӗ шайри ӑсталӑх кирлӗ. Чӑваш журналистики пахалӑха яланах тӗп вырӑна хурать, профессири чи лайӑх йӑла-йӗркене асра тытса пурнӑҫпа тан утать.

2020 ҫулта Чӑваш автономине йӗркеленӗренпе 100 ҫул ҫитнине чаплӑн паллӑ тума хатӗрленетпӗр. Ҫавна май эсир Чӑваш Ен халӑхӗн ят-сумне ҫӳлерех ҫӗклес, унӑн историйӗпе культурин еткерлӗхне анлӑрах сарас, ҫамрӑк ӑрӑва хамӑрӑн ҫирӗп йӑла-йӗркемӗрпе кӑмӑл-сипет никӗсӗсем ҫинче пӑхса ҫитӗнтерес ӗҫе пысӑк тӳпе хываса шанса тӑратӑп.

Республикӑра пурӑнакан ҫынсемшӗн влаҫ органӗсемпе массӑллӑ информаци хатӗрӗсен хушшинчи уҫӑ калаҫу малалла та ҫаплах усӑллӑ пулӗ тесе шутлатӑп.

Сире пӗтӗм чунтан хӑвӑрӑн пултарулӑхӑр вӑй-халне туллин уҫса пама, ӗҫре ӳссе пыма, халӑха кӑсӑк тата вӑл ыйтакан хайлавсемпе тивӗҫтерсе тӑма, мӗнпур пуҫаруна ӑнӑҫулӑх сунатӑп! Пурсӑра та ҫирӗп сывлӑх тата пур тӗрлӗ ырлӑх сунатӑп, тиражсем йышланса, рейтинг кӑтартӑвӗсем лайӑхланса пыччӑр!

**Чӑваш Республикин Пуҫлӑхӗ М. ИГНАТЬЕВ.**

Йыхрав

## Хӗллехи спорт сезонне уҫаҫҫӗ

Январӗн 18-мӗшӗнче Муркаш районӗнче хӗллехи спорт сезонне уҫаҫҫӗ. Ҫак пулӑма халалланӑ спорт ӑмӑртӑвне кӑҫал Калайкасси вӑтам шкулӗнче ирттерме палӑртнӑ.

Йӗлтӗрҫӗсен ӑмӑртӑвӗ эстафета мелӗпе иртет. Вӑтам шкулсем икшер команда тӑратаҫҫӗ: аслӑ ӳсӗмри ушкӑн (10 – 11 классем) тата вӑтам ӳсӗмри ушкӑн (7 – 9 классем). Тӗп шкулсен команди вӑтам ӳсӗмри ушкӑна кӗрет. Командӑсенче 2 яшпа 2 хӗр пулмалла. Яшсен дистанцийӗ – 2 км, хӗрсен – 1 км.

Предприятисемпе организацисен, ял тӑрӑхӗсен командисенче те 4-шар ҫын пулмалла: 2 арҫын тата 2 хӗрарӑм. Пурте 1-шер километрлӑ дистанцире вӑй виҫӗҫ.

Ертӳҫӗсен чупӑвӗн дистанцийӗ те 1 километрпа танлашать. Ӑмӑрту 11 сехетре пуҫланать.

**Йӗркелӳ комитечӗ.**

**26 ЯНВАРЯ – ПРИЕМ ДЕТСКОГО ВРАЧА-ОФТАЛЬМОЛОГА**

**Адрес: с. Моргауши, ул. Мира, д. 15**

**Запись по тел. 8-967-475-87-57.**

Имеются противопоказания. Проконсультируйтесь со специалистом. 2-10.

Вӗренӳ

## «Раштав ҫӑлтӑрӗ» – Орининта

**Январӗн 17-мӗшӗнче Орининти Культура ҫуртӗнче «Раштав ҫӑлтӑрӗ» ятпа район фестивалӗ иртет. Кӑҫалхипе виҫҫӗмӗш хут ӗнтӗ вӑл районти шкулсенче вӗренекен тӗрлӗ ӳсӗмри ачасене пӗрле пухать.**

Ачасем ҫак асамлӑ уявра Раштав праҫникӗпе ҫыхӑннӑ сӑвӑсем калӗҫ, юрӑсем юрлӗҫ, сценкӑсем кӑтартӗҫ. Культура ҫуртӗнче ҫак уявпа ҫыхӑнтарса хатӗрленӗ ал ӗҫӗсен куравне те йӗркелеме палӑртнӑ.

Кӑмӑл пуррисем пурте уяв мероприятине пырса курма пултараҫҫӗ.

Мероприяти 10 сехетре пуҫланать.

**Район администрацийӗн вӗренӳ пайӗ.**

# «Земство учителӗ» программа старт илчӗ

**2020 ҫулти январӗн 1-мӗшӗнчен Чӑваш Енре те, Раҫҫейри ытти регионти пекех, «Земство учителӗ» программа ӗҫлеме тытӑнчӗ.**

Яла, рабочисен поселокне е 50 пинрен сахалтарах ҫын пурӑнакан хула евӗрлӗ поселоксене ӗҫлеме кайнӑшӑн учительсене пӗр хутчен компенсаци тӳлевӗпе тивӗҫтерӗҫҫӗ. Вӑл 1 миллион тенкӗпе танлашать.

«Земство учителӗ» программӑна 55 ҫул тултарман учительсем хутшӑнма пултараҫҫӗ. Ҫакна валли «учитель» вакантлӑ должноҫа йышӑнма заявкӑпа вӗренӳ организацине тухмалла тата конкурс суйлавӗ валли хатӗрленӗ документсен пакетне регион операторӗ патне ҫитермелле. Заявкӑсене 2020 ҫулти январӗн 10 – апрелӗн 15-мӗшӗсенче йышӑнаҫҫӗ.

«Земство учителӗ» программӑн официаллӑ порталӗ те ӗҫлет (https://zemteacher.edu.ru/).

Чӑваш Ен Вӗренӳ министерствин сайтӗнче пӗлтернӗ тӑрӑх, ҫак программӑна хутшӑнса ӗҫе вырнаҫнӑ учителӗн вырӑнта 5 ҫултан сахал мар тата эрнере 18 сехетрен сахал мар «тиевпе» ӗҫлемелле.

Каласа хӑвармалла, «Земство учителӗ» программӑн пуҫаруҫи – РФ Президенчӗ Владимир Путин. Ҫак шухӑша вӑл 2019 ҫулта Федераци Канашне тухнӑ Ҫырура палӑртнӑччӗ.

Сӑмах май, РФ Ҫутӗҫ министерствин сайтӗнчи информаци тӑрӑх, «Земство учителӗ» программӑна пурнӑҫлама 2020 ҫул валли федераци бюджетӗнче 1 млрд та 653 млн ытла тенкӗ пӑхса хунӑ, планланӑ 2021 тата 2022 ҫулсем валли – 1 млрд та 220 млн ытла тенкӗ тата 1 млрд та 179 млн ытла тенкӗ.

**Н. НИКОЛАЕВА хатӗрленӗ.**

## Саламлатпăр

Пирĕн ылтăн-кĕмĕлтен те хаклăрах çыннăмăра – Муркашра пурăнакан **Алевтина Гурьевна СМИРНОВĂНА** 80 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Эсĕ пурри – пирĕн савăнăç, нимĕнпе виçеймин пуянлăх. Сывлăху çирĕп пултăр, ĕмĕрӳ вăрăм килтĕр, умри çулу санăн яланах анлă та çутă, такăр пултăр. Мĕн шутланисем пурнăçланса пыччăр. Пире савăнтарса пурăнма Турри сана тата нумай çул усратăр.



Вăрăм пултăр сан кун-çул.
Чир-чĕр çине алă сул.
Каçпа выртсан канлĕх килтĕр,
Ирпе тăрсан ырлăх пултăр.
Вăрманта мĕн чухлĕ хурăн,
Çавăн чухлĕ эсĕ пурăн.

**Ăшă салампа: кинĕ, мăнукĕсем, кĕçĕн мăнукĕсем, хăтипе тăхлачи тата сывăх тăванĕсем.**

Çĕр çинчи ылтăн-кĕмĕлтен те хаклăрах аннене, юратнă асаннене, кукамая, тăхлача – Çĕньял Шурча ялĕнче пурăнакан **Анфиса Ивановна ЛЕОНТЬЕВĂНА** сумлă юбилей ячĕпе чун-чĕререн тухакан ăшă туйăмсемпе саламлатпăр. Сывлăху çирĕп, кĕрекӳ ырă çынсемпе тулли пултăр. Мĕн шутланисем пурнăçланса пыччăр. Тавах сана пурнăçри йывăрлăхсене çĕнтерсе пыма пулăшнăшăн, пире ăнланнăшăн, юратнăшăн, яланах пулăшса пынăшăн. Пире савăнтарса пурăнма Турри сана тата нумай çул усратăр. Эсĕ – пирĕн хĕвелĕмĕр, чун ăшши тата телей. Çĕре çити таймапус, пурнăç паракан çăлкуçăмăр.



**Саламлаканĕсем: ывăлĕсемпе кинĕсем, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, 9 мăнукĕпе 6 кĕçĕн мăнукĕ.**

Хаклă юлташăмăра – Кӳстерек ялĕнче пурăнакан **Альбина Владимировна ЕРДУКОВĂНА** сумлă юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр, ырлăх-сывлăх, телей, ăнăçу сунатпăр. Умри çулу санăн яланах такăр пултăр, мĕн шухăшланисем пурнăçланса пыччăр, кĕрекӳ яланах тулли пултăр.



**Саламлаканĕсем: юлташĕсем.**

Юратнă аттепе аннене – Турай ял тăрăхĕнчи Çатракассинче пурăнакан **Калерия Германовнăпа Викентий Викторович ИВАНОВСЕНЕ** январĕн 16-мĕшĕнче çемье çавăрнăранпа 55 çул çитнĕ ятпа чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, телей, вăрăм кун-çул сунатпăр. Эсир 55 çул пĕр-пĕрне юратса, хисеплесе пурăнатăр. Сирĕн çамрăклăх йывăр вăхăтсене лекнĕ пулсан та, эсир пуçа усса ларман. Хуçалăхра тăрăшса ĕçленĕ, 5 ача çуратнă. Вĕсем çĕршыва юрăхлă çынсем пулччăр тесе тăрăшнă, вĕрентнĕ. Эсир çемьере пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнни пиреншĕн ырă тĕслĕх пулса тăрать. Турри сире пулăшса вăй-хал парса тăтăр, чир-чĕртен упратăр. Эпир сире юрататпăр, тав сăмахĕ калатпăр, татах та нумай çул пурăнма сĕнетпĕр.



**Салампа: ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, кĕçĕн мăнукĕ, хăти-тăхлачисем, çывăх тăванĕсем.**

Юратнă хĕрĕме, аппана – Патаккасси ялĕнче пурăнакан **Светлана Николаевна НИКОЛАЕВĂНА** чи ăшă туйăмсемпе юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, тапса тăракан çăлкуç пек иксĕлми вăй-хал, юрату, телей сунатпăр. Ĕçре яланах ăнăçу пултăр. Çемьере пĕр-пĕрне ăнланни, килĕшӳ хуçаланччăр. Кĕрекӳ яланах çывăх çынсемпе, тăвансемпе тулли пултăр. Турри сана яланах упраса пытăр, вăй-хал парса тăтăр.



**Салампа: амăшĕ, йăмăкĕсем çемйисемпе.**

## Тӳрĕ ыйту – тӳрĕ хурав

# «Пирĕн урамра юр хыракан çук»

Редакцине шăнкăравласа çапла пĕлтерни иртнĕ тунтикун **Çатракасси ял тăрăхне кĕрекен Кашмаш ялĕнче пурăнаканран** пулчĕ. Тĕрĕссипе çак вăхăта хĕллехи чăн-чăн çил-тăманне курма ĕлкĕреймерĕмĕр пулин те, кăштах юр вĕçтерме тытăнни те ял çыннисемшĕн ыйту кăларса тăратать иккен. Юр сахал пулни урамсенчи çулсене тасатса тирпейлесе тăрассишĕн яваплисене сӳрĕклентерсе ярать-ши? Вулакан каласа панă тăрăх, сăмах Кашмашри Мир урамĕ пирки пырать. Кăçал пĕрре те урам хушшинче юр тасатакан техникăна курма май пулманни çинчен калать.

Вырăнти çулсене пăхса тăрасси пĕтĕмпех ял тăрăхĕсен тивĕçĕ шутне кĕрет. Ял тăрăх администрацийĕсем конкурс ирттерсе çулсене пăхса-тытса тăма организацисемпе е предпринимательсемпе пĕр çулталăклăх килĕшӳ тăваççĕ.

Апла пулин те хĕллехи вăхăтра ялсенчи çулсене юртан тасатса тăрассин ыйтăвĕ паян çуралнăскер мар. Кун пек шăнкăравсем район хаçачĕн редакцине çулленех тăтăшах пулаççĕ. Çавна май р**айон администрацийĕн капиталлă строительство тата общество инфраструктурине аталантарассин пайĕпе** çыхăнтăм, ял тăрăхĕсенче конкурссем ирттерсе вырăнти çулсене пăхса-тытса тăма мĕнле организацисене е предпринимательсене çирĕплетнипе, вĕсемпе контракт е килĕшӳ тунипе интереслентĕм. Аялараx çак организацисемпе, вĕсен ертӳçисемпе тата предпринимательсемпе, вĕсемпе çыхăнмалли телефон номерĕсемпе паллашма пултаратăр.

Çавна та каласа хăварас пулать. Çӳлерех асăннă организацисемпе уйрăм предпринимательсем вырăнсенчи çулсене хĕллехи вăхăтра юртан тасатса тăрассишĕн кăна мар, çулталăк тăршшĕпех йĕркеллĕ пăхса тăрассишĕн те яваплă пулса тăраççĕ. Апла пулсан хăвăрăн урамри е ялти çула пăхса тăрассипе ыйтуллă самант сиксе тухсан тӳрех ял тăрăхĕн администрацийĕпе е яваплă çынсемпе çыхăнма сĕннĕ пулăттăм.

**«Тӳрĕ ыйту – тӳрĕ хурав» телефонĕсем: 62-2-82, 8-927-857-42-06.**

**В. ШАПОШНИКОВ хатĕрленĕ.**

| Ял тăрăхĕсем | Яваплă организаци е предприниматель | Ертӳçи | Çыхăнмалли телефон номерĕ |
|---|---|---|---|
| Уйкас Янасал | Ильич яч. хис. хуçалăх | И.В. Николаев | 8(83541) 61-5-48 |
| Мăн Сĕнтĕр | «Сокол» пĕрлешӳ | А.В. Смирнов | 8-927-856-11-71 |
| Ильинка | Р.Л. Каргин | | 8-906-382-09-55 |
| Катькас | В.В. Ильина | | 8-927-864-42-56 |
| Муркаш | Д.Н. Колесников | | 8-903-476-81-20 |
| Москакасси | «Сокол» пĕрлешӳ | А.В. Смирнов | 8-927-856-11-71 |
| Оринин | Р.И. Наумова | | 8-960-307-37-38 |
| Çатракасси | Ю.В. Евграфов | | 8-902-328-37-86 |
| Турай | Суворов яч. хис. хуçалăх | А.В. Воробьев | 8(83541) 64-3-00 |
| Йӳçкасси | В.А. Федоров | | 8-927-669-42-53 |
| Хорнуй | Р.И. Наумова | | 8-960-307-37-38 |
| Чуманкасси | В.А. Федоров | | 8-927-669-42-53 |
| Шетмĕпуç | А.А. Хафизова | | 8-917-917-70-31 |
| Юнкă | А.А. Толстов | | 8-906-131-41-49 |
| Ярославка | Р.В. Ананьев | | 8-965-686-93-42 |
| Ярапайкасси | Ю.В. Евграфов | | 8-902-328-37-86 |

## Следстви комитетне йĕркеленĕренпе – 9 çул

# Саккуна пăсакансене каçару пулмĕ

**Январĕн 15-мĕшĕнче Раççей Федерацийĕн Следстви комитетне патшалăхăн хăй тĕллĕнхи уйрăм органĕ шайĕнче туса хунăранпа тăхăр çул пулчĕ. Ăна федерацин 2010 çулхи декабрĕн 28-мĕшĕнчи «О Следственном комитете Российской Федерации» саккунĕпе килĕшӳллĕн уйрăмах йывăр категорие кĕрекен уголовлă ĕçсене тĕпчес тĕллĕпе 2011 çулхи январĕн 15-мĕшĕнче йĕркеленĕ. Çав вăхăтранпа вăл саккуна пăсакансемпе тата патшалăха хирĕç тăвакан йĕркесĕрлĕхпе çирĕп кĕрешме пуçларĕ.**

**Çак кун умĕн РФ Следстви комитечĕн Етĕрнери районсем хушшинчи следстви пайĕн ертӳçи Николай ЯКОВЛЕВ пирĕн хăш-пĕр ыйту çине хуравлама килĕшрĕ:**

– Пирĕн тĕп ĕç хамăра шаннă тивĕçе оперативлă пурнăçласси тата следствие пахалăхлă ирттересси, çыннăн правипе ирĕклĕхне хӳтĕлессине, патшалăха хирĕçле йĕркесĕрлĕхпе кĕрешессинче саккунлăхпа тивĕçтерессипулса тăрать.

**– Иртнĕ çулхи ĕç-хĕле мĕнле хакланă пулăттăр?**

– Иртнĕ çул пирĕн пая пырса тивекен тĕрлĕ преступлени пирки пĕтĕмпе 332 пĕлтерӳ килчĕ, ку кăтарту унчченхи çулхинчен сахалтарах пулни лайăх. Вăл шутран 65-шĕ тĕлĕшпе уголовлă ĕç пуçарнă, Муркаш районĕпе – 23 ĕç. Пĕтĕмпе 84 ĕç тăрăх следстви вĕçленĕ. 73-не айăплав пĕтĕмлетĕвĕпе суда тăратнă.

**– Сирĕн пая пырса тивекен преступленисем кӳнĕ тăкак шайĕ еплерех?**

– Тăкакăн пĕтĕмĕшле калăпăшĕ иртнĕ çул 106 пин тенкĕ чухлĕ пулнă. Муркаш районĕнче ку кăтарту, ытти районтипе танлаштарсан, пысăкрах, 83 пин тенкĕ. Следстви ĕçĕсем ирттернĕ май, харпăрçăсене 95 пин тенкĕ каялла тавăрса панă, Муркаш районĕпе – 72 пин тенкĕ.

**– Уйрăмах çыннăн кун-çулне синкерлĕ, вăхăтсăр татни пăшăрхантарать.**

– Иртнĕ çул пирĕн пай çынна вĕлернĕ 4 факт, пĕлсе тăрсах çыннăн сывлăхне сиен кӳнипе кун-çул татнă 1 факт регистрациленĕ. Муркаш районĕнче çынна вĕлернĕ 1 факт пулнă. Пурин тĕлĕшпе те следстви вĕçлесе айăплисене тупса палăртнă. Преступленисене уçассинче криминалистикăри çĕнĕ йышши техника пысăк пĕлтерĕшлĕ.

**– Коррупципе кĕрешес ĕç сирĕн пайра çивĕч тăрать-и?**

– Иртнĕ çул коррупци пĕлтерĕшлĕ йĕркесĕрлĕх пирки 15 хутчен пĕлтернĕ, 6-шĕ тĕлĕшпе уголовлă ĕç пуçарнă, 5-шне суда тăратнă.

Граждансемпе ĕçлесси, вĕсен информацийĕ – пиреншĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ. Иртнĕ çул çынсен 186 ыйтăвне пăхса тухнă, вăл шутра 115-шне – граждансен йышăнăвĕнче палăртнă хыççăн. Малашне те пирĕн коллектив шаннă тивĕçе çирĕп пурнăçлĕ.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА калаçнă.**

## Шалти ĕçсен пайĕнче

# Полицейскисем ӳсĕмлĕ ĕçлес тĕллевлĕ

**«Çитменлĕхсене тишкерсе тĕпченĕ. Вĕсене пĕтерсе ӳсĕмлĕ ĕçлес тĕллевпе пур ене те шута илетпĕр: ума лартнă задачăсене туллин пурнăçламалла», – çапла вĕçлерĕ хăйĕн докладне Раççей Шалти ĕçсен министерствин Муркаш районĕнчи шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхĕ Владимир Степанов шалти ĕçсен пайĕн иртнĕ çулти ĕçĕн пĕтĕмлетĕвĕн канашлăвĕнче.**

Пай пуçлăхĕ хăйĕн докладĕнче палăртнă тăрăх, туллин ĕçлесе çитереймен енсем район территорийĕнче çынна вĕлернĕ, çынна хĕненĕ, пĕлсе тăрсах çыннăн сывлăхне сиен кӳнĕ фактсем унчченхинчен ытларах пулнипе, обществăлла вырăнсенче тунă преступленисен шучĕ ӳснипе, контрольти çынсем тата ӳсĕр çынсем преступлени ытларах тунипе çыхăннă. Çавăн пекех экономика тата миграци тĕлĕшĕнчи преступленисене тупса палăртассипе çителĕксĕр ĕçленине, ултавлă ĕççене нумайăшне уçса пама май килменнине, хăш-пĕр енпе преступленисене уçса парассин кăтартăвĕ чакнине те палăртрĕç канашлура.

Владимир Степанов иртнĕ çул район территорийĕнче пурĕ 226 преступлени регистрациленине пĕлтерчĕ. Преступленисем 2018 çултинчен сахалрах пулин те, ӳсĕрле тунă преступлени шучĕ чакать теме çук – вĕсем ытларах. Интернетпа, кĕсье телефонĕпе усă курса тунă тата банк картти çинчен укçа вăрланипе çыхăннă преступленисен шучĕ палăрмаллах ӳснĕ. Полицейскисем профилактика ĕçне тĕрлĕ енлĕ пурнăçласа пыраççĕ, анчах ытларах чухне çак енсемпе преступлени пулни çынран хăйĕнчен килни куçкĕрет.

Обществăлла вырăнсенче преступленисем иртнĕ çултинчен ытларах пулнă, çав вăхăтрах урамсенче йĕркене пăснă факт сахалланнă. Унччен малтан та саккуна пăснă çын тепре преступлени тунин кăтартăвĕ чакни профилактика ĕçĕн витĕмлĕхне кăтартать. Полицейскисем иртнĕ çулта районта йывăр преступленисене асăрхаттарас тĕллевпе йĕркене пăснă тĕслĕхсене ытларах тупса палăртнă. Следовательсемпе дознавательсен енчен саккунсăр майпа арестлени пулман. Административлă штрафсене шыраса илессипе ĕçе самаях вăйлатни палăрать – 7 млн ытла тенкĕ шыраса илнĕ.

Докладра Владимир Степанов оперативлă службăн кашни енĕ çинче чарăнса тăчĕ.

Пĕтĕмлетӳ канашлăвне иртерме çитнĕ Чăваш Республики тăрăх шалти ĕçсен министрĕн çумĕ Леонид Вакс Муркаш районĕнчи пай регионти пĕтĕмлетӳ рейтингĕнче тăваттăмĕш вырăнтине палăртрĕ. Çав вăхăтрах муркашсене малалла ăнтăлмалли майсене те, ĕçре ырă тĕслĕхсем пуррине те шута илме сĕнчĕ.

Районти шалти ĕçсен пайĕпе тачă çыхăнса ĕçленине район прокурорĕн çумĕ Юрий Семенов, район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев тата саккунпа право сыхлавĕн ытти органĕн районти ертӳçисем те палăртрĕç. Вĕсем район территорийĕнче профилактика ĕçне пĕрлехи вăйпа пурнăçланине, пĕр-пĕрне ăнланса вăй хунине каларĕç.

Шалти ĕçсен районти пайĕ çумĕнчи общество канашĕн ертӳçи Евгений Плечов тата ветерансен канашĕн ертӳçи Валерий Яковлев Муркаш полицейскийĕсем яланах малтисен ретĕнче пулнине, çавăнпа та районта пурăнакансене хăрушсăрлăхпа тивĕçтерессине тивĕçлĕ шайра тытса тăрасса шаннине каларĕç.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Çар комиссариатĕнче

# Анăçран пуçласа Тухăç таранах

**Чылай организацире çулталăк пуçламăшĕнче иртнĕ çулхи ĕçе пĕтĕмлетеççĕ. Çар комиссариачĕсенче вара пысăк пĕтĕмлетĕве çулталăкра сахалтан та иккĕ тăваççĕ – çурхи тата кĕрхи призывсем вĕçленнĕ хыççăн. Кĕрхи призыв шăпах Çĕнĕ çул уявĕ тĕлне вĕçленчĕ. Унăн пĕтĕмлетĕвĕпе Муркаш тата Элĕк районĕсен çар комиссарĕ Владимир КАЗАКОВ паллаштарма кăмăл турĕ:**

– Хаçат вулакансене малтанах эпĕ Чăваш Ен çар комиссарĕ Александр Мокрушин туса панă пĕтĕмлетӳри хăш-пĕр самантпа паллаштарасшăн. Çар комиссарĕ республикăри 1056 çамрăк кĕрхи призыв вăхăтĕнче çар ретне тăнине пĕлтерчĕ. Вăл çара кайнă призывниксем Тип çĕр çинчи çарта, Сывлăш-космос çарĕсенче, çавăн пекех элита çарсенче – Сывлăш-десант тата спецназ çарĕсенче хĕсметре тăнине те палăртрĕ.

Муркаш тата Элĕк районĕсен çар комиссариатĕнчен çара наряд тăрăх 46 çамрăка ăсатмалла пулнă. Эпир икĕ районтан пурĕ 53 çынна çара ятăмăр.

Иртнĕ призыв çара каякансене суйласа илессинче пысăк требованисем пулнипе палăрса тăчĕ тесен йăнăш пулмасть. Çакă çара каякансем тĕлĕшпе пур енлĕ çирĕп условисем лартнипе çыхăннă. Пирĕн çар комиссариатĕнчен акă икĕ призывник Раççей Федерацийĕн хурал службинче службăра тăма резерва суйланнăччĕ. Иккĕшĕ те йĕркеллĕ яшсем, унта хĕсметре тăмалли пур параметра та тивĕçтереççĕ, анчах, шел пулин те, Президент полкне лекеймерĕç – суйлав питĕ çирĕп, конкретлă.

Кунта каласа хăвармалла, иртнĕ кĕркунне пирĕн икĕ салтак Президент полкĕнчен таврăнчĕ. Кашмашри Виталий Иванов çинчен район хаçатĕнче çырнине нумайăшĕ вуланă пулĕ.

Географи тĕлĕшĕнчен илес пулсан, пирĕн призывниксем Раççейĕн тĕрлĕ кĕтесĕнче службăра тăраççĕ: Калининград облаçĕнче те, Амур облаçĕнче те пур пирĕн ентешсем, Архангельск облаçĕнче те, Крымра та – пур çар округĕнче те. Пур çар тĕсĕнче те: танкистсем те, артиллеристсем те, тинĕс пехотинецĕсем те, ытти чаçре службăра тăракансем те пур. Çара кайнă призывниксенчен, водитель удостоверенийĕ пуррисенчен, чылайăшĕ унччен ДОСААФ-ра вĕреннине те палăртса хăвармалла.

Каламасăр иртме çук, тĕрлĕ сăлтавпа çара каяссинчен пăрăнакансем те пулчĕç призыв вăхăтĕнче. Апла пулин те призыв кампанине тивĕçлĕ шайра йĕркелеме пултартăмăр. Çавăнпа та çар комиссариатĕнче вăй хуракансемпе пĕрлех медицина комиссийĕн, йĕрке тата право сыхлав органĕсен представителĕсене пысăк тав сăмахĕ калатăп. Район администрацийĕн ертӳлĕхĕн ответлăхне, ял тăрăхĕсен администрацийĕсенчи специалистсен тăрăшулăхне палăртса вĕсене те тав тăватăп. Шалти ĕçсен пайĕн сотрудникĕсем ăсату кунĕсенче йĕркене тивĕçлĕ шайра тытса тăма пулăшнине уйрăммăн палăртса хăвармалла: хăш-пĕр кунсенче вунă ытла призывника ăсатни те пулнă.

Призыв кампанийĕ вăхăтĕнче 6 çамрăк контракт мелĕпе çара кайма кăмăл турĕ. Вĕсем хăйсем суйласа илнĕ вырăнсенче çарта икĕ çул службăра тăрĕç. Иртнĕ çул 7 çамрăк çар вĕренӳ заведенийĕсене вĕренме кĕме пултарчĕ.

Призыв тапхăрĕн пĕтĕмлетĕвĕ кĕскен çапла. Ку çул вара Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче Çĕнтерӳ тунăранпа 75 çул çитнин паллипе иртет. Çавăнпа та кăçалхи призывниксемшĕн те вăл паллă çул пуласси куçкĕрет.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Ăмăрту çĕнтерӳçисем

# Ырă ята тивĕçнĕ фермерсем

Суйласа илнĕ ĕçре вăй хуракан çĕнĕлĕхсене алла илессипе тимлет пулсан, вăл хăйĕн ĕçне аван пĕлнине, малашлăха шанса пăхнине, умри тĕллевсене çирĕп курнине ĕненетĕн. Çакăн пек вăй хурсан, пуçăннă ĕç çине алă сулмасан, ӳсĕмсем те кĕттермеççĕ. Паянхи сăн ӳкерчĕкре эсир пĕлтĕр «Чи лайăх хресчен (фермер) хуçалăхĕ» ята тивĕçнисене куратăр. Çак хуçалăхсен ертӳçисем **(сăн ӳкерчĕкре сулахайран сылтăмалла)**: Алина Афанасьева (1 степеньлĕ диплом), Владимир Федоров (3 степеньлĕ диплом), Александр Толстов (2 степеньлĕ диплом) уявра ĕçри тăрăшулăхшăн пысăк чыс-хисепе тивĕçрĕç.

– Ӳсĕм тумалли сăлтав – вырăнта йĕрке пулни, выльăх-чĕрлĕх патĕнче те, уй-хирте те пĕрле ĕçлекенсемпе пĕр чĕлхе тупса кал-кал ĕçлени. Çавăнпа та паянхи ĕçе ырана хăвармасан, çĕнĕ технологисене алла илсе пырсан, ӳсĕмсем те нумай кĕттермеççĕ, – терĕç ыйвăрлăхсем умĕнче пуç усман фермерсем.

Тăрăшулăхне кура – ĕç кăтартăвĕсем. Çак лару-тăрура малашнехи ӳсĕмсем тата курăмлăрах пуласса та шанас килет.

**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**



Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче

# Руль умĕнче – 38 çул



**Экономикăра пулса иртекен ырă улшăнусенче, çынсен хутшăнăвĕнче юлашки çулсенче автомобиль транспорчĕн пĕлтерĕшĕ уйрăмах ӳсрĕ. Çапла вара автомашина паян унччен пуянлăх паллинчен ытларах хутшăну мелĕ тата вăхăтлă ĕç хатĕрĕ пулса тăчĕ. Ăна кура водитель пĕлтерĕшĕ те куç умĕнчех малти вырăна тухрĕ.**

...Суворов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕ – яланах шыравра, унăн ĕçченĕсем те кун сиктермесĕр производство аталанăвĕшĕн вăй хураççĕ. Çĕнĕлĕхсене алла илсе малашлăхпа пурăнакансен ялан майлах пур çĕрте те ĕç вĕресе тăрать кăна. Кунта манăн-санăн тесе ĕç тиркекен çук. Владимир Орлов водитель те **(сăн ӳкерчĕкре)** – ыттисемпе пĕрлех. Хушнă ĕçе вăхăтра та пахалăхлă пурнăçлассишĕн, çул çинче ялан тирпейлĕ ĕçлессишĕн тăрăшать вăл.

Пирĕн тĕл пулу иртнĕ кĕр кунĕсенче, çĕр ĕçченĕ тăрăшсах выльăх апачĕ янтăланă вăхăтра пулчĕ. Сенаж масси турттарма черетлĕ рейса тухас умĕн выльăх апачĕ çулакан комбайн ĕçне сăнаса Анаткасси каччи хăй сисмесĕрех шухăш авăрне кĕрсе кайрĕ. Ĕç стажне куç умне кăларса çак самантра Владимир Валерьянович хăйĕнчен хăй тĕлĕнчĕ: «Тĕлĕнмелле, çавăн чухлех пулчĕ-ши вара? Чăннипе каласан, 1982 çултанпа миçе пин çухрăм хыçа юлчĕ-ши, миçе пин тонна тиев турттарнă-ши?..»

Кĕске кану вăхăтĕнче хăйĕн патне пырса çак ыйтăва хускатсан, пуян ĕç опычĕллĕ шофер хуравран пăрăнмарĕ. Калаçăва юнашар иртекен автоçул инçĕшне тинкерсе пуçларĕ. Калаçу йĕркелене пынă май, унăн кашни ыйту çинех хуравĕ хатĕр пулни курăнчĕ.

– Вăтам шкул хыççăн манăн хулана каяс шут пулман. Ялтах тĕпленмелле. Çитменнине эпĕ – кĕçĕнни. Аслă пичче хулара водительте ĕçлерĕ пулсан, иккĕмĕшĕ тăван хуçалăхрах механизаторта вăй хучĕ. Алла аттестат илсен эпĕ водительте вĕренме кайма шутланине аттепе анне хирĕçлемерĕç, ывăлĕ пурнăç çулĕ çине тухса пынишĕн савăнчĕç кăна, – ăшă кулăпа аса илчĕ арçын çур ĕмĕре яхăн каяллахине.

Ятарлă курссенче авомашина тытăмне, унпа çӳрессине, çул-йĕр правилисене вĕренсе алла водитель правине илсенех Владимирăн хĕсмете кайма ят тухать. Тăван енрен инçетре çар службин çулĕсене ирттернĕскер, унтах автомашинăпа ĕçлессине алла илет.

Çирĕп хресчен çемйинче ӳснĕскер, унталла-кунталла вылямa хăнăхман. Çапла вара çартан таврăнсан та пурнăçри малашлăха ял хуçалăхĕпе çыхăнтарма шутланă Владимир Суворов ячĕпе хисепленекен колхозра водительте ĕçлеме пуçлать. Унтанпа 37 çул хыçа юлчĕ ĕнтĕ. Çак тапхăрти кашни кун Владимир Валерьяновичăн ĕнерхи пекех асра.

Ялта çуралса ӳссе пурнăç çулĕ çине хăйĕн тăрăшулăхĕпе тухнă В. Орлов паян нумай çамрăкшăн ĕçри тĕслĕх пулса тăрать. Пурнăçра çирĕп çул суйласа илнĕ водитель хăйĕн ĕçĕпе яланах ыттисене пулăшассишĕн тăрăшнă. Çакна шута хурса Владимир Валерьяновича пĕрре мар чысланă.

Мăшăрĕ Надежда Николаевна та пĕрлешӳллĕ хуçалăхра ĕнесене машинăпа сăвакан операторта ĕçлесех тивĕçлĕ канăва тухнă. Вĕсен икĕ ывăлĕ ашшĕамăшĕн ырă енĕсене малалла тăсакансем пулса тăраççĕ.

Çакăн çинчен калаçса автомашинăна вырăнтан хускатнă водительтен унăн ĕмĕт-шухăшĕпе килĕшсе уйрăлтăм.

**А. БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

Çĕр ыйтăвĕ тавра

# Чăн хуçа пуласчĕ

Этемлĕх Çĕр планета çинче пиншер çул пурăнать пулин те, çĕр ыйтăвне татăклăн татса паман-ха. Пирĕн çĕршывра вăл патша стройĕ вăхăтĕнчех пĕлтерĕшлĕ пулнă. Колхозсемпе совхозсем туса хурсан та, çĕре хакласси пĕрремĕш вырăнтан кайман. Малтанхи вăхăтра уй-хирте электричество е телефон юписем тавра выртакан çĕре алăпа акса кĕреплепе тураса çӳренĕ, анчах хресчен çĕре пушă е çум айĕнче выртмарман.

Мĕн куратпăр-ха эпир паян? Эпĕ хуçасăр, усă курмасăр выртакан çĕр пирки каламастăп. Çум курăк айне пулнă, вăрман ӳстерекен лаптăксене курма хăнăхнă ĕнтĕ эпир. Мана ытларах харпăрлăхри çĕр юхăнса выртни хумхантарать. Вăхăтра тыр-пулпа хумханса ларакан уй-хире вакласа ял çыннисене валеçсе тăкнă лаптăксене халĕ тĕллĕн-тĕллĕн çум курăкĕ е вăрман пусса илсе пырать. Çапах ăна чылайăшĕ курмăш пулса иртет. Паян хускатнă ыйтупа эпĕ Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕн администрацине темиçе хут та тухнăччĕ.

Хăй вăхăтĕнче Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнче те ял çыннисене килти хушма хуçалăха аталантарма тесе 60-шар сотка, каярах пай çĕрĕ те валеçсе панăччĕ. Ялсенче вылăх-чĕрлĕх усрасси чакнă май, çак çĕр лаптăкĕсем паян «манăçа» тухса пыраççĕ.

Тепĕр тĕслĕх. Туçи Олкаш ялĕ патĕнче те вунă çул каяллах çуртсем лартма тесе паха çĕре валеçнĕччĕ. Çурчĕсем паян та çук. Çĕрĕ çинче çум курăк ашкăрать кăна.

Иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенче Каршлăх вăрманĕ çумĕнче «Чувашрыба», «Станкоремонт» пĕрлешӳсемпе республикăри Хăрушсăрлăх министерствин ĕçченĕсем валли çуртсем тума тесе çĕр пăхнăччĕ. Халĕ вара кунти «джунгли» курсан чун ыратать. Мĕнле çĕр çавăн пекех айăплă пулса юлчĕ?

Малтанхи вăхăтра ялсене тирпей-илем кĕртессипе конкурссем ирттеретчĕç. Тирпейсĕр пурăнакансене урамра купаласа хунă ăпăр-тапăршăн асăрхаттарса тасатма вăхăт паратчĕç е административлă майпа ответ тыттаратчĕç. Халĕ вара ял хушшине пырса куракан та çук. Камăн çакна йĕркелемелле?

Çакăн пек киревсĕр ӳкерчĕке пирĕн таврара çеç мар, районăн ытти кĕтесĕнче те асăрхама пулать. Эпĕ районта чылай çул ĕçлерĕм. Çавна май иртнипе паянхине танлаштарма та пултаратăп. Çынсем паян çĕре çавăн пек хакламанни ырри патне илсе çитерес çуках. Чи хăрушши – çамрăк ăру çак чунсăрлăха курса ӳсни.

**П. ВОРОБЬЕВ.**

Врач канашĕ

# Турăх ĕçни усăллă

Ял çынни килти хушма хуçалăхра ĕне тытассине самай чакарчĕ пулин те, ăна усракансем унчченхиллех тупăш çулĕпе пыраççĕ. Килте ĕне пур чухне алă айĕнче паха сĕчĕ те, хăйми те, турăхĕпе çăвĕ те çителĕклĕ. Паянхи кĕске сăмах турăх çинчен.

Турăх пирки халăхра нумай пурăнма пулăшать тесе калани пур. Эпĕ те ăна хирĕçлеместĕп, çынсене кунсерен пĕрер стакан турăх ĕçме сĕнетĕп. Çакă çыннăн пыршăлăх микрофлорине йĕркене кĕртет, вар хытасран тата колит (хулăн пыршăн лăймака сийĕ шыçни) пуласран упрать, холестерин шайне пĕчĕклетет, хулăн тата тӳрĕ пыршă чирĕсенчен сыхлать.

Малараx каланине шута илсе килти хушма хуçалăхра ĕне тытаканăн талăкра пĕр стакан турăх ĕçме май пурах тесе шутлатăп.

**В. ГРИГОРЬЕВА,**
**районти тĕп больницăн пĕтĕмĕшле практика врачĕ.**

Культура

# Талантлă ентеш пирĕн асăмрах

Катькас ял библиотекинче Театр çулталăкне пирĕн ентешĕмĕр, композитор, актёр, педагог, ача-пăча театр коллективĕн ертӳçи, вăрçă участникĕ Александр Леонтьевич Романов çуралнăранпа 100 çул çитнине халалласа ирттернĕ аса илӳ каçĕпе пĕтĕмлетрĕмĕр.

Александр Романов 1919 çулхи раштав уйăхĕн 15-мĕшĕнче Катькас ялĕнче çуралнă. Шкул хыççăн А. Романов Ф.П. Павлов ячĕллĕ музыка училищинче, Мускаври библиотека институтĕнче пĕлӳ пухнă. 1946 – 1948 çулсенче Чăваш патшалăх пукане театрĕнче актёр тата аккордеонист пулса ĕçленĕ. 1949 – 1959 çулсенче республикăри куçса çӳрекен колхоз театрĕнче те вылянă. 1960-мĕш çулсенче республикăри тĕрлĕ шкулта музыка урокĕсене вĕрентнĕ, ачасен пултарулăх коллективĕсен ертӳçи пулнă.

А. Романов 1970-мĕш çулсенчен пуçласа юрă-кĕвĕ çырма пуçланă. Вăл кĕвĕленĕ юрăсенчен нумайăшĕ республикăра тухса тăракан хаçат-журналта пичетленнĕ: «Тавтапуç сана, учитель», «Эс кĕтетĕн-и?», «Аннеçĕм, аннеçĕм», «Чечек татрăм эп савнине пама», «Ан кĕттер мана» «Кӳлĕ хĕрринче» тата ытти нумай юрă.

Александр Леонтьевич сцена çинче 20 ытла роль калăпланă. Пукане театрĕнче вылянă спектакльсенчи рольсенчен çаксем асра юлнă: Упа, Арап тата Генерал-Воевода (Е. Тараховскин «По щучьему велению»), Килти йытă (С. Мерзляковăн «Настенька»), Жучка (О. Высотскаян «Репка») тата ытти те. А. Романовăн режиссёр ĕçĕсенчен çаксене палăртса хăвармалла: Г. Ландаун «Машенька и Медведь», С. Мерзляковăн «Три подружки», Е. Тараховскин «По щучьему велению» хайлавĕпе лартнă спектакльсем.

А. Романов чирленине пула 1997 çулхи мартăн 29-мĕшĕнче пурнăçран уйрăлнă.

Библиотекăри тĕл пулăва А. Романовăн хĕрĕ Татьяна Александровна Кудрявцева мăшăрĕпе, Мемеккассинчи çывăх тăванĕсем те килсе çитрĕç, ял-йыш та пухăнчĕ. Татьяна Александровна ашшĕ пирки тĕплĕнрех каласа пачĕ. Тăванĕсем те, ял-йыш та, Александр Леонтьевич пирки аса илнĕ май, вăл çав тери юрра-кĕвве юратнине палăртрĕç. Хăнасене те юрăпа кĕтсе илнине, ырă кăмăллă та халăхшăн тăрăшакан çын пулнине аса илчĕç.

Тĕрлĕ уявра яланах çын хушшинче пулма кăмăлланă. Аккордеон каласа халăхăн кăмăл-туйăмне хаваслă юрăсемпе çĕклеме тăрăшнă. Пурте пĕрле юрлаччăр тесе юрă сăмахĕсене шултра сас паллисемпе шурă хут çине çырса хатĕрленĕ.

Тĕл пулура спектакльсенче вăл вылянă рольсене те аса илчĕç. 1949-мĕш çулта пирĕн яла республикăри куçса çӳрекен колхоз театрĕ килнĕ. Унăн тĕп вырăнĕ пирĕн ялта пулнă. Ял халăхĕ нумай спектакль курса савăннă. Кун пирки те тĕл пулура сăмах пуçартăмăр.

Мероприятие А. Угаровăпа И. Осипова ертсе пычĕç. Культура çурчĕн илемлĕх ертӳçи Н. Кондукторова купăс каласа хăнасене юрлаттарса-ташлаттарса савăнтарчĕ. Тĕл пулу пурне те савăк кăмăл-туйăм парнелерĕ.

Пирĕн тăрăхран çакăн пек талантлă çын тухнипе эпир мăнаçланатпăр, мухтанатпăр, савăнатпăр.

**А. УГАРОВА,**
**Катькас ял библиотекин ертӳçи.**

Спорт

# 25-мĕш юбилейлă турнир

«Оринино» ял хуçалăх производство кооперативĕн кубокне çĕнсе илессишĕн йĕркелекен турнир кăçалхипе 25-мĕш хут иртет. Ăна январĕн 18-мĕшĕнче Оринин вăтам шкулĕнче ирттерĕççĕ.

Яланхи пекех ăмăртура:
- волейбол вăййисем (8 çын);
- шашка вăййисем (1 арçын тата 1 хĕрарăм);
- шахмат вăййисем (1 арçын тата 1 хĕрарăм).

Ăмăртăва Муркаш районĕнче пурăнакан тата кунта çуралса ӳснĕ çынсем хутшăнма пултараççĕ. Ăмăрту 10 сехетре пуçланать.

**Йĕркелӳ комитечĕ.**


**НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ ПОДАРКИ И СКИДКИ.**
**Гарантия 10 лет.**
**Пенсионерам скидки**
**Тел. 8-961-346-56-76.** 20-20.

**КУПЛЮ / ТУЯНАТÁП**

**КУПЛЮ КОРОВ, БЫЧКОВ, ТЕЛОК, ЛОШАДЕЙ, ОВЕЦ. ДОРОГО. Старых, молодых в любом состоянии и вынужденный забой. Тел. 8-961-344-03-82. Рома.** 1-20.

* * *

**КУПЛЮ БЫЧКОВ от 10 дней до 500 кг, КОРОВ, ТЕЛОК. ДОРОГО. Тел. 8-937-951-19-03.** 9-16.

* * *

**ĔНЕ, ВĂКĂР, ТЫНА ПĂРУСЕМ, СУРĂХСЕМ ТУЯНАТПĂР. Тел. 8-905-341-69-25.** 8-10.

**ЗАКУПАЮ КОРОВ, БЫЧКОВ. Тел. 8-965-688-01-77, Андрей.** 9-15.

* * *

**КУПЛЮ БЫЧКОВ от месяца до 600 кг. КОРОВ. ТЕЛОК. ВЫНУЖДЕННЫЙ ЗАБОЙ. Тел. 8-937-952-33-80.** 4-5.

* * *

**КУПЛЮ КОРОВ, БЫЧКОВ от месяца на откорм. ДОРОГО. Тел. 8-937-391-23-33.** 4-5.

* * *

**ЗАКУПАЮ КОРОВ, БЫЧКОВ, ТЕЛОК НА МЯСО. Тел. 8-961-345-77-89.** 9-14.

**РАБОТА / ĔÇ**

**В МБОУ «Сятракасинская СОШ» требуется водитель школьного автобуса. Оплата согласно штатному расписанию. Тел. 8(83541)68-3-90, 8(83541) 68-2-18.**

* * *

**В связи с расширением производства ОАО «Ядринмолоко» приглашает на работу: укладчика-упаковщика – з/п от 17000 руб. и выше; наладчиков КИПиА – з/п от 23000 руб. и выше; грузчика – з/п от 20000 руб. и выше; наладчика автоматов и полуавтоматов – з/п от 22 000 руб. и выше; кладовщика – з/п от 18000 руб. и выше; специалиста по учету продукции – з/п от 18000 руб. и выше. Трудоустройство по ТК, полный соц. пакет. По маршруту Чебоксары – Нискасы – Ядрин курсирует служебный транспорт. Тел. 8-962-321-04-76.** 1-2.

**Продаем пиломатериалы обрезные, кровельные 25 мм, половые 50 мм, брус любого размера; шпунтованные доски, вагонку; цемент, кирпич. Доставка. Тел. 8-903-346-40-58, 8-927-996-16-52.** 6-20.

**20 цифр. кан. БЕСПЛАТНЫХ. «ЧĂВАШ ЕН» на ТРИКОЛОР, ТЕЛЕКАРТА. Установка, обмен, ремонт. 8-905-345-77-19.** 7-10.

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Цена договорная. Доставка по району бесплатно. Тел. 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11.** 8-10.




**Внимание!**
**Открылся новый фирменный магазин «ШАЛЕЕВСКИЕ/ИШЛЕЙСКИЕ КОЛБАСА И РЫБА»**
**в с. Моргауши по ул. Ленина, 40, к.1, рядом с автовокзалом. ПРИЯТНО УДИВИМ ВАС РАЗНООБРАЗИЕМ КОЛБАС И РЫБ, а также НИЗКИМИ ЦЕНАМИ!!!** 9-10.

**Продается жилой дом в д. Адабай. В доме имеются все коммуникации. Ровное место. Земля 40 соток, плодоносящий сад. Тел. 8-927-997-71-42.** 8-11.

* * *

**СХПК ПЗ им. Е. Андреева реализует ячмень по оптовой цене за 8 руб/кг и ЭКД – 20 руб/кг с места. Возможна доставка. Тел. 8-937-012-58-80, 8-937-012-51-31, 8-937-012-13-34, 8-937-012-73-75.** 2-12.

* * *

**Продаются бычки от 1 до 3 мес. Тел. 8-909-302-57-46.**

* * *

**Сдаются в аренду помещения под «Ветеринарную аптеку» пл. 49,6 кв.м. и 10,45 кв.м. под офис или магазин в здании «Дом быта». Цена договорная. Тел. 8(83541)62-0-93.** 1-2.

**Продаю 3-хкомнатную квартиру в с. Моргауши по ул. Заводская, д.19, пл. 59,4 кв.м., индивидуальное отопление. Квартира светлая, просторная. Без ремонта. Оставим мебель и бытовую технику. Цена 1 млн 400 тыс. руб. Подробности по тел. 8(917)675-40-17.**

* * *

**Продаю корову красной масти, молочной породы. Адрес: Ядринский район, с. Янымово. Тел. 8-937-955-84-56.**

* * *

**Май уйăхĕнче виççĕмĕш пăруламалли хура-шурă тĕслĕ ĕне сутатăп. Очăкасси ялĕ. Тел. 8-953-014-64-01.**

* * *

**Продаю ячмень, овес, пшеницу, мелкий картофель и ЭКД. Возможна доставка. Тел. 8-952-022-55-60.** 1-10.


**ТАВ ТĂВАТПĂР**

Пирĕн юратнă, хаклă çыннăмăра, Атапай ялĕнче çуралса ӳснĕ, Чуманкассинче пурăннă Иван Димитриевич Вязова юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, йывăр хуйха пирĕнпе пĕрле пайланăшăн пĕтĕм тăван-хурăнташа, Чуманкасси шкул коллективне, Чуманкасси ял тăрăхĕн пуçлăхне Н. Белова, пускилсене, поварсене, ял-йыша, унта пынă мĕнпур çынна чĕререн тухакан тав сăмахĕ калатпăр. Турри сире пулăшса пытăр, чир-чĕртен упратăр.

**Ачисем, тăванĕсем.**

Отдел культуры, архивного дела и туризма администрации Моргаушского района и райком профсоюза работников культуры Моргаушского района выражают глубокое соболезнование Андреевой В.В., методисту МБУК «Музей верховых чувашей» Моргаушского района Чувашской Республики, ее родным и близким, по поводу кончины матери

**КИСЕЛЕВОЙ**
**Нины Васильевны.**

Коллектив МБУК «Музей верховых чувашей» выражает глубокое соболезнование методисту Андреевой В.В. в связи со смертью матери

**КИСЕЛЕВОЙ**
**Нины Васильевны.**

Е. Андреев ячĕпе хисепленекен хуçалăх коллективĕ кунта нумай çул бригадăра тата сысна ферминче ертӳçĕре ĕçленĕ

**Нина Васильевна**
**КИСЕЛЕВА**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки унăн тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

**ИЗВЕЩЕНИЕ О ПРОВЕДЕНИИ СОБРАНИЯ О СОГЛАСОВАНИИ МЕСТОПОЛОЖЕНИЯ ГРАНИЦЫ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Кадастровым инженером Правдиным Валерием Михайловичем, квалификационный аттестат № 21–13–45, почтовый адрес: Чувашская Республика Красноармейский район, с.Красноармейское, ул. 30 лет Победы, дом №16, контактный телефон:89196691449, регистрационный номер в государственном реестре саморегулируемых организаций кадастровых инженеров №009 от 21.10.2016 года. Регистрационный номер члена (№ свидетельства) 0913 номер регистрации в государственном реестре лиц, осуществляющих кадастровую деятельность 28937, СНИЛС – 114-215-402/96.

Выполняются кадастровые работы по уточнению границ земельного участка в отношении земельного участка №836, кадастровый номер 21:17:121201:893, расположенного по адресу: Чувашская Республика – Чувашия, р-н Моргаушский, с/пос. Ярабайкасинское, садоводческое товарищество «Дружба».

Заказчиком кадастровых работ является Денисова Татьяна Николаевна. Адрес: Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Т.Кривова д.7, кв.13, тел. 89373789990.

Собрание заинтересованных лиц по поводу согласования проекта межевания границ состоится по адресу: Чувашская Республика – Чувашия, р-н Моргаушский, с/пос. Ярабайкасинское, садоводческое товарищество «Дружба», возле дома правления, 20 февраля 2020 года в 13.00ч. Предметом согласования является размер и местоположение границ уточняемых земельных участков.

С проектом межевого плана земельного участка можно ознакомиться по адресу: Чувашская Республика, Красноармейский район, с. Красноармейское, ул. 30 лет Победы, дом №16. Возражения по проекту межевого плана и требования о проведении согласования местоположения границ земельных участков на местности принимаются с 20 января 2020 г. по 20 февраля 2020 г. по адресу: Чувашская Республика, Красноармейский район, с. Красноармейское, ул. 30 лет Победы, дом №16 или по электронной почте kadinzhener@mail.ru или на сайте www.кадинженер.рф.

Смежные земельные участки, с правообладателями которых требуется согласовать местоположение границы: уч-к 817 с кадастровым номером 21:17:121201:878. Адрес: Чувашская Республика, р-н Моргаушский, с/пос. Ярабайкасинское, садоводческое товарищество «Дружба».

При проведении согласования местоположения границ при себе необходимо иметь документы, удостоверяющие личность, а также документы о правах на земельный участок.

| | Среда | | | | Четверг | | | | Пятница | | | | Суббота | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 03 | 09 | 15 | 21 | 03 | 09 | 15 | 21 | 03 | 09 | 15 | 21 | 03 | 09 | 15 | 21 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Явления по- | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура | -1 | -3 | -2 | -1 | +2 | +1 | 0 | +2 | +3 | +1 | 0 | +1 | +2 | +1 | 0 | 0 |
| Ощущается | -6 | -9 | -8 | -8 | -4 | -5 | -6 | -4 | -2 | -3 | -4 | -3 | -2 | -5 | -6 | -6 |
| Давление | 751 | 752 | 752 | 750 | 747 | 746 | 745 | 745 | 747 | 751 | 755 | 756 | 758 | 755 | 754 | 753 |
| Ветер | 5 | 5 | 7 | 8 | 9 | 9 | 8 | 9 | 6 | 4 | 3 | 4 | 5 | 7 | 8 | 8 |


Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви.
ЧР Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин "Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ" Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.

Редакципе издатель адресĕ: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
Телефонсем: тĕп редактор – 62-1-36, бухгалтери – 62-1-35,
пайсем: общество пурнăç пайĕ – 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕсем – 62-1-38.
Факс: 62-1-36. E-mail: smi24@cap.ru, smi24-1@cap.ru, redaction_morgau@mail.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

Р– реклама материалĕ.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: П2851.
Хаçат юнкунсерен тата шăматкунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Н.Н. Николаева.
Пичете панă 14.01.2020 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 16 сех. 20 мин., чăннипе – 16 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4479.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии АО «ИПК «Чувашия»: 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.